26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1943
ДЕКАБРЬ
22
ЮНКУН
252(6489) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Ялти çамрăксен хисеплĕ задачисем

Иртнĕ ялхуçалăх çулĕнче колхоз хресченĕсем çĕнĕ çитĕнӳсем турĕç. Вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене çĕнтерсе пырса, вĕсем тухăçлă тырпул туса илчĕç, государство умĕнчи обязательствăсене срокчен пурнăçа кĕртрĕç тата государствăна 2 миллион та 500 пин пăт ытла тырă сутрĕç. Çак пархатарлă ĕçсене пурнăçа кĕртнĕ çĕрте комсомолецсемпе çамрăксем те хăйсен пысăк пултарулăхне кăтартса пачĕç. Вĕсем, колхоз хирĕсенче, МТС-сенче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлесе, колхоз стройĕн вăйĕпе хăватне ӳстерсе пычĕç, ӳстерсе пыраççĕ те.

Халĕ хĕл çитрĕ, çитес çулта татах та тухăçлăрах тырпул туса илме хатĕрленмелли ответлă тапхăр пуçланчĕ. Хĕллехи вăхăтпа мĕнле те пулин туллинрех усă курмалла, çитес çул тухăçлă тырпул туса илме хатĕрленес тĕлĕшпе пур ĕçсене те пурнăçа кĕртмелле,—çакăн пек задача тăрать халĕ ялти комсомолецсемпе çамрăксем умĕнче. Тухăçлă тырпул туса илес тесен, ялти пĕтĕм çамрăксен хĕллехи вăхăтрах çуракине хĕрӳллĕн те тĕплĕн хатĕрленмелле, тухăçлă тырпул туса илмелли майсене çине тăрса вĕренмелле.

Малта пыракан районсенчи комсомолецсемпе çамрăксем уйхир ĕçĕсене вĕçленĕ хыççăнах çуракине хатĕрленме тытăнчĕç. Вăрнар районĕнчи çамрăк колхозниксем, ноябрь уйăхĕнчех хăйсен слетĕнче 1944-мĕш çулхи задачăсем çинчен сӳтсе-явса, çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе татăклă обязательствăсем илчĕç. Вĕсем кĕркуннепе хĕллехи тапхăрта кĕл 3.250 центнер, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ 2.000 центнер пухма, уя 500.000 лав тислĕк кăларма пулнă. Уйхирте юр тытса хăварас, вăрлăхсене сортласа хатĕрлес, лашасене лайăх пăхса усрас, колхозсем валли кадрсем вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттерме пулнă. Вăрнар районĕнчи çамрăк колхозниксем республикăри мĕнпур комсомолецсемпе комсомолкăсене тата çамрăк колхозниксене гектартан 100 пăт тырă туса илессишĕн социализмлă ăмăртăва тухма чĕнсе каларĕç.

Вăрнар районĕнчи çамрăк колхозниксем чĕнсе калани республикăри комсомолецсемпе çамрăксемшĕн ĕç программи пулса тăрать. Вăрнар çамрăкĕсен опычĕпе тата примерĕпе ĕçлесен, пирĕн республикăри колхоз çамрăкĕсем тухăçлă тырпул туса илессишĕн пыракан кĕрешӳре çĕнĕ те паха çитĕнӳсем тума пултараççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ комсомолăн ялсенчи организацийĕсен, Вăрнар çамрăкĕсем чĕнсе калание ответлесе, пĕтĕм çамрăксене вăйлă тырпулшăн кĕрешме çĕклес пулать. Çак ĕçе тума комсомолăн чылай организацийĕсем тимлĕн тытăнчĕç. Красноармейски районри Янчеллă ялсоветĕнчи «Прогресс» колхозри комсомолецсем вăрлăхсем сортлама звено организациленĕ. Вăл звено 50 центнер ытла вăрлăх сортланă тата 48 центнер пăрçана алăпа суйланă.

Анчах та çитес çул тухăçлă тырпул туса илессишĕн пур районсенче те тивĕçлипе кĕрешмеççĕ-ха. Комсомолăн хăшпĕр районсенчи руководителĕсем ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасси çине шанса тăраççĕ пулас. Çапла, ВЛКСМ Ишлей райкомĕн секретарĕ Кузнецов юлташ Вăрнар районĕнчи çамрăксем чĕнсе каланине сӳтсе-явас тата колхоз çамрăкĕсене вăйлă тырпулшăн кĕрешĕве мобилизацилес ĕçе иккĕмĕш секретарь çине хунă. Унтан та ытларах, ВЛКСМ Комсомольски райкомĕн секретарĕ Степанова юлташ çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе хăй пачах та ĕçлеменнине ялсенче пулнипе сăлтавлама пикенет. Ялсенче пулса кăна çуракине хатĕрленес ĕçе тивĕçлипе организацилеме пулать. Çавна шута илесшĕн мар пулас Комсомольски районри комсомол работникĕсем. Комсомолăн Çĕрпӳ, Шăмăршă районĕсенчи организацийĕсем те ку енĕпе мухтанма пултараймаççĕ.

Комсомолăн ялти организацийĕсен паянхи хисеплĕ задачи вăл — хăйсем çине илнĕ обязательствăсене вăхăтра тата пахалăхлăн пурнăçа кĕртесси пулать. Чи малтан, тракторсемпе ялхуçалăх машинисене тĕплĕн юсас ĕçе пуçарса, йĕркелесе пымалла. Çак ĕçе туса пыма çамрăксен бригадисене организацилемелле. Тракторсене юсасси, запаслă пайсем пуçтарса хатĕрлесси мĕнле пынине тăтăшах тĕрĕслемелле, çак ĕçре чăн-чăн çамрăк хастарлăха хурса ĕçлемелле.

Çуракине кĕске вăхăтра тата пысăк пахалăхлăн ирттерес тесен, тутă та вăйлă лашасем кирлĕ. Комсомолецсемпе çамрăксен лашасене пăхса усрас ĕçе хăйсем çине илес пулать. Лашасем пăхас ĕçре ответсăрлăха тĕппипех пĕтермелле. Кашни сеялкăна мĕнле лаша кӳлмеллине халех палăртса хумалла, лаша кӳлмелли хатĕрсене пĕтĕмпех юсаса хатĕрлемелле.

Пуян тырпул туса илес тесен, çĕре лайăх çемçетес пулать. Комсомолецсемпе çамрăксен хăйсен пултарулăхне уйхире удобрени турттарас ĕçе мобилизацилемелле. Кашни колхозрах удобренисем пухас тата вĕсене хире турттарас тĕлĕшпе ĕçлекен транспорт бригадисем пулчăр. Вĕсене хастарлă комсомолецсемпе çамрăк колхозниксем, çав ĕçе фронтри пек йĕркеллĕ те хăвăрт тума пултаракан çамрăксем ертсе пычăр. Çак ĕçсене тунă вăхăтрах тăпрари нӳрлĕхе сыхласа хăварма май паракан ĕçсене те пурнăçа кĕртмелле. Уйхирте юр ытларах тытса хăварас пулать. Юр тытас тĕлĕшпе пионерсемпе шкул ачисем пысăк пулăшу пама пултараççĕ, вĕсене ĕçе анлăн явăçтармалла.

Агротехника ĕçĕсене тĕплĕн пĕлмесĕр, вĕренмесĕр, вĕсене ăнăçлă пурнăçа кĕртме çук. Комсомолецсемпе çамрăксен, çĕр ĕçне лайăх пĕлекен опытлă хресченсем пулас тесен, куллен тăрăшса вĕренмелле. Вĕренӳ ĕçне организацилес тĕлĕшпе уйрăмăнах хĕллехи тапхăр лайăх вăхăт пулса тăрать. Колхозсенче агротехника кружокĕсем, стахановла шкулсем организацилемелле. Вĕсене çамрăксен анлă массисене явăçтармалла.

Комсомолецсемпе çамрăксем колхозăн мĕнпур ĕçĕсене хутшăнса ĕçлеме тивĕçлĕ. Калăпăр, колхозра вăрлăхсем çитмеççĕ. Комсомолецсен кирлĕ таран вăрлăхсем тупса вĕсене пĕтĕмпех сортласа хума пулăшмалла. Вăйлă тырпул звенисене организацилес, çĕрулми тăррисем касса хатĕрлес тата ытти çавăн пек ыйтусемпе тимлĕн интересленес пулать.

Комсомолецсен колхозниксем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе лайăх йĕркелемелле. Вулав çурчĕсем, колхоз клубĕсем, хĕрлĕ кĕтессем лайăх ĕçлеччĕр. Кашни колхознике фронтсенчи хыпарсене тата тĕнчери лару-тăру çинчен пĕлтерсе тăмалла. Политикăллă-массăллă ĕçе лайăх организацилени колхозниксен активлăхне çĕклеме пулăшать.

Çитес çул тухăçлă тырпул туса илесси комсомолецсемпе çамрăксен хĕрӳллĕ ĕçĕнчен нумай килет. Вăйпитти арçынсем фронтсенче ирсĕр тăшманпа çапăçнă вăхăтра колхозсенче тĕп йывăрлăхсене çамрăксем тӳссе ирттереççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ комсомолецсемпе çамрăксен халь никăçанхинчен те ытларах вăй хурса ĕçлемелле.

Комсомол райкомĕсен ялсенчи пуçламĕш организацисене куллен ертсе пымалла. Ĕçри çитменлĕхсене çийĕнчех палăртса, вĕсене пĕтерме пулăшмалла. Çитес çулхи вăйлă тырпулшăн комсомолецсен ответлăхне ӳстермелле. ВЛКСМ райкомĕсемпе пуçламĕш организацисен вăйлă тырпулшăн пыракан кĕрешĕве организацилекенсем пулмалла, пуçламĕш парторганизацисемпе ВКП(б) райкомĕсен комсомол организацийĕсене куллен ертсе, пулăшса пырас пулать.

Ялти комсомолецсемпе çамрăксем! Пĕтĕм вăя, хастарлăхпа пултарулăха фронта пулăшас ĕçе парар. Колхозсенче мĕнпур вăя шеллемесĕр ĕçлесе, ирсĕр тăшмана çĕнтерес сехете çывхартар!

Планран ирттерсе 40 пин тенкĕлĕх продукци кăларма пулчĕç

КАНАШ. Сталин ячĕпе тăракан артель коллективĕ 1943-мĕш çулхи производство программине декабрĕн 5-мĕшĕ тĕлне 103 процент пурнăçланă. Унтанпа вăл планран ирттерсе темиçе пин тенкĕлĕх продукци туса кăларнă. Столяр Слепов, çĕвĕçĕсем тăвакан мастерсем Шашкин, Фролов тата Афанасьев юлташсем ĕç нормине куллен 180—200 процент тултарса пыраççĕ.

Артельри рабочисемпе работницăсем, Харьковри суд процесĕн материалĕсемпе паллашнă хыççăн тата Çар Трибуналĕн Приговорне ырласа, кăçал планран ирттерсе 40.000 тенкĕлĕх продукци туса кăларма обязательство илнĕ. Çак тĕлĕшпе халь кашни рабочипе работница пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

С. КУЗНЕЦОВ.

ССР СОЮЗĔН СОВНАРКОМĔНЧЕ

Совет Союзĕн Государство гимнĕ çинчен

Совет Союзĕн хальхи Государство гимнĕ «Интернационал» хăйĕн содержанийĕпе пирĕн çĕршывра совет стройĕ çĕнтернĕ пирки пулса иртнĕ таран улшăнусене тата совет государствин социализмлă ăшчикне палăртса тăманнине кура, — ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Государство гимнĕн текстне çĕнĕ текстпа — хăйĕн содержанийĕпе совет стройĕн шухăш-кăмăлĕпе тата ăшчикĕпе килĕшсе тăракан текстпа улăштарма йышăннă.

Государство çĕнĕ гимнĕн çак текстне çирĕплетнĕ:

ГИМН СОВЕТСКОГО СОЮЗА

(Текст Сергея Михалкова и Эль-Регистана).

Союз нерушимый республик свободных
Сплотила навеки Великая Русь.
Да здравствует созданный волей народов,
Единый, могучий Советский Союз!

Славься, Отечество наше свободное,
Дружбы народов надежный оплот!
Знамя советское, знамя народное
Пусть от победы к победе ведет!

Сквозь грозы сияло нам солнце свободы,
И Ленин великий нам путь озарил,
Нас вырастил Сталин — на верность народу,
На труд и на подвиги нас вдохновил.

Славься, Отечество наше свободное,
Счастья народов надежный оплот!
Знамя советское, знамя народное
Пусть от победы к победе ведет!

Мы армию нашу растили в сраженьях,
Захватчиков подлых с дороги сметем!
Мы в битвах решаем судьбу поколений,
Мы к славе Отчизну свою поведем!

Славься, Отечество наше свободное,
Славы народов надежный оплот!
Знамя советское, знамя народное
Пусть от победы к победе ведет!

Государство çĕнĕ гимнĕ валли **А. В. Александров** композиторăн музыкине йышăннă.

Гимн музыкин нотисем уйрăмăн пичетленсе тухаççĕ. Государство çĕнĕ гимнне 1944 çулхи мартăн 15-мĕшĕнчен пуçласа пур çĕрте те юрлама тытăнмалла тăваççĕ.

Редакцирен: Государство çĕнĕ гимнĕн чăвашла текстĕ çывăх кунсенче пичетленсе тухать.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ДЕКАБРĔН 20-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Декабрĕн 20-мĕшĕнче НЕВЕЛЬ хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем çапăх наступлени туса пынă, 70 ял ытла тытса илнĕ, вĕсем хушшинче — МАЛАШЕНКИ, ЗАГОРЯНЫ, КОЖЕМЯКИ, ПОЛУЯНОВО, КАЛЬЦЫ, ГРИБУЛИ, ПРИВАЛЬНИ, ВЕРЕЧЬЕ ятлă ялсем.

КОРОСТЕНЬ районĕнче пирĕн çарсем противник пехотипе танкĕсен атакисене сирсе янă.

КИРОВОГРАД хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен шултра вăйĕсен контратакисене сире-сире янă, тăшмана çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тӳстернĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă тата артиллерипе миномётсенчен персе тăнă.

Декабрĕн 19-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 82 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зениткăй артиллери тăшманăн 27 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Невель хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем çапăх наступлени туса пынă. Совет çарĕсем пыра-пыра çапнипе тăшман каялла чакать, хĕçпăшалла боеприпассем нумай пăрахса хăварать. Паян пирĕн çарсем 70 ял ытла тытса илнĕ. Пĕр участокра нимĕçсем хăйсен çапса çĕмĕрнĕ чаçĕсен юлашкийĕсене пухнă та пĕр меллĕ рубежа хăйсен аллинче хăварма хăтланнă. Пĕр соединени чаçĕсем, хаяррăн çапăçса, тăшманăн çав группине аркатса тăкнă. Çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 1.500 вилли таран выртса юлнă. Тепĕр участокра пирĕн çарсем тăшман оборонине саваланса кĕнĕ те вăйлă çирĕплетнĕ темиçе яла тытса илнĕ. Пĕр ялшăн пынă çапăçура 300 гитлеровеца вĕлернĕ, 12 тупă, 80 пулемет тата тăшманăн çар пурлăхĕ тиенĕ пысăк обозне тытса илнĕ. Чылай çынна тыткăна илнĕ.

* * *

Коростень районĕнче тăшман пехотипе танкĕсем пирĕн позицисене атакăланă. Пысăк çухатусем тӳссе, нимĕçсем малтан халăх пурăнакан пĕр пункта вăркăнса кĕнĕ. Пирĕн чаçсем контратака тунă та хаяррăн çапăçнă хыççăн тăшмана каялла хăваласа янă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 600 вилли ытла выртса юлнă тата çунса кайнă 15 танкĕ ларса юлнă. Каçалапа тăшман çĕнĕрен атакăлама тытăннă, анчах та 12 танкне персе çĕмĕрсен, каялла чакнă.

* * *

Кировоград хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре нимĕçсем, пехотăпа танксен йышлă вăйĕсене илсе пырса, вĕсене темиçе хут та контратакăна кĕртсе янă. Пĕр районра тăшмана çапăçăва пехотăн пĕр полкне тата 100 танк ытла кĕртсе янă. Пирĕн артиллери тата бронебойщиксен подразделенийĕсем нимĕç танкĕсем çине пеме тытăннă. Хаяр çапăçу пуçланса кайнă. Флангран кĕтмен çĕртен пырса çапнă совет танкисчĕсем çав çапăçăва вара пирĕн майлă татса панă. Нимĕçсем, пысăк çухатусем тӳссе, хăйсен малтанхи рубежĕ патне чакнă. Туллимар даннăйсем тăрăх, пирĕн чаçсем нимĕçсен 1.200 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă, 39 танкне тата хăй тĕллĕн çӳрекен 9 туппине çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Совет авиацийĕ, çанталăк начар тăнине пăхмасăрах, нимĕç çарĕсен ушкăнĕсене пыра-пыра çапнă. Кун каçиччен пирĕн летчиксем нимĕçсен 20 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен туппине çити, çар хатĕрĕсем тиенĕ 200 автомашинипе лавне ытла пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен 3 складне тата 40 вагона сирпĕнтерсе янă, артиллерипе миномётсен 30 батарейине çити пусарса лартнă.

* * *

Крымра кĕрешекен партизансен отрячĕ декабрĕн 8-мĕшĕнче район центрĕнче вырнаçнă тăшман гарнизонне сасартăк атакăланă. Вирлĕн пырса çапса, партизансем тăшмана халăх пурăнакан çав пунктран хĕссе кăларнă, çапăçура 150 нимĕç салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. Совет патриочĕсем горючи складне тата боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă, 8 пулемет, темиçе вунă винтовкăпа автомат тата боеприпассемпе апат-çимĕç нумай тытса илнĕ. Крымри партизансен тепĕр отрячĕ, танксене пемелли пăшалсемпе персе, нимĕçсен пикировка тăвакан бомбардировщикне ӳкернĕ. Самолетпа летчик çунса кайнă.

* * *

Нимĕçсен 10-мĕш егерски батальонĕн 4-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ обер-ефрейтор Курт Эрдман çапла каласа кăтартнă: «Пирĕн батальонра 1.100 çын тăратчĕ. Вĕсем пурте суйласа илнĕ вăйлă салтаксемччĕ, вĕсене пурне те ятарласа хĕллехи çапăçусем валли хатĕрленĕччĕ. Анчах та командованин пире ирĕксĕрех çуллахи çапăçусене кĕртсе ямалла пулчĕ, мĕншĕн тесен вырăссем пирĕн оборонăна нумай çĕртен татса кĕчĕç. Çуллахи çапăçусем вăхăтĕнче батальона виçĕ хутчен çынсем хушса пачĕç, апла пулин те вăл хальхи вăхăтра питех те вăйсăрланса юлчĕ. Халь батальонра мĕн пурĕ те 86 çын кăна. Унăн командирĕ—вăрçса курман лейтенант Блюм, вăрçă пуçламĕшĕнче ăна взвод та шанса паман пулĕччĕç. Батальонри чи лайăх салтаксем Понери станцийĕ патĕнче, Десна, Днепр тата Припять шывĕсем хĕрринче вилсе пĕтрĕç. Чĕррĕн тăрса юлнисем халĕ пĕр усăсăр вилесшĕн мар. Çак вăрçăра Германия аяла пулса юлнине эпир пĕлсе çитрĕмĕр, çавăнпа та çакна нимĕнле те ăнланма пултараймастпăр: мĕншĕн пирĕнтен татах та çĕнĕ жертвăсем ыйтаççĕ-ши? Тросна районĕнчен каялла чакнă чухне пире çапла калатчĕç: вырăссене Десна шывĕ патĕнче чарса лартатпăр, тетчĕç. Днепртан каялла чакнă чухне пире офицерсем çапла шантарса калатчĕç: питĕ хăватлă «хĕвелтухăçĕнчи вал» хӳттинче эпир хĕл каçатпăр, тетчĕç. Анчах та эпир Днепр шывĕ патĕнче те чарăнса тăма пултараймарăмăр, Припять шывĕ патнелле тата унтан та лерелле чакса кайрăмăр. Пирĕн батальон кашни кунах сахалланса пырать, çавăн пекех Российăри вĕçĕ-хĕррисĕр хирсенче пĕтĕм нимĕç çарĕ вăйсăрланса пырать».

* * *

Хĕрлĕ Çар пыра-пыра çапнипе каялла чакма пуçласан, нимĕçсен фашистла захватчикĕсем Полесье облаçĕнчи Брагин ялĕнчи мирлĕ çынсене нумайĕшне вĕлерчĕç. Гитлерла пуçкасакансем Хĕрлĕ Çара тăватă ывăлне панă Александр Лесенкопа унăн пĕтĕм çемьине: арăмне, виçĕ хĕрне тата ывăлĕн пĕчĕк ачине персе пăрахнă. Брагин районĕнчи ытти ялсенче те нимĕçсем питĕ хăрушă ирсĕр ĕçсем тунă, нумай ялсене çаратса тухнă, ялсенчи çынсене фашистсен чуралăхне хăваласа кайнă е персе пăрахнă. Маложин ялĕнчен гитлеровецсем Германи каторгине 192 çын хăваласа кайнă. Фашистла ирсĕрсем Ульяна Плющай колхозницăна чĕррĕн çунтарса янă. Игнатий Черненкона, Иван Гришенкона тата ялти ытти çынсене те персе пăрахнă. Маложин ялĕнче нимĕçсем колхозниксен 156 пӳртне мĕн пур хуралтисемпе пĕрле çунтарса янă. Нимĕç вăрă-хурахĕсем çавăн пекех колхоз клубне, туллимар вăтам шкул пӳртне, 2 витене, выльăх картине тата пĕтĕм ялхуçалăх инвентарьне — плугсене, сӳресене, сеялкăсене, веялкăсене тата молотилкăсене çунтарса янă.

Государствăна çĕрулми сутаççĕ

Хĕрлĕ Çара тата ытларах пулăшас тесе, республикăри колхозсемпе колхозницăсем государствăна кооперации урлă çĕрулми сутаççĕ.

Декабрĕн 21-мĕшĕ тĕлне республикăри 12 район государствăна çĕрулми сутмалли плана пурнăçланă.

Малта пыракан Сĕнтĕр, Елчĕк, Элĕк, Октябрьски районсем государствăна çĕрулми сутмалли плана ирттерсе тултарнă. Октябрьски район сутнă çĕрулмине райсоюз склачĕсене леçсе пĕтернĕ.

Сĕнтĕр районĕнчи колхозсемпе колхозниксем государствăна 22.800 пăт çĕрулми сутнă, вăл шутран 12.000 пăтне кооперации склачĕсене леçсе панă. «КИМ», «Аврора» колхозсем сутнă çĕрулмине пĕтĕмпех государство склачĕсене леçсе пĕтернĕ.

Анчах Кувакино, Советски, Шăмăршă, Тăвай, Калинино, Первомайски районĕсенче государствăна çĕрулми сутас ĕç сӳрĕккĕн пырать-ха.

Тăвай районĕнчи колхозсем государствăна 150 тонна çĕрулми сутрĕç. Потребкооперацин çавăн чухлĕ çĕрулмине хăвăртрах йышăнмалла. Анчах районри хăшпĕр сельпо председателĕсем çакăншăн кирлĕ пек тăрăшни курăнмасть-ха. Тăрмăшри сельпо председателĕ Спириленко, Эльпуçĕнчи сельпо председателĕ Воробьев сельпо районĕнчи колхозсем государствăна мĕн чухлĕ çĕрулми сутнине те пĕлмеççĕ. Ку сельпосем халĕ пĕр центнер çĕрулми те йышăнман.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Шоссе çулĕсен Управленийĕн шоссе çулĕсем тунă çĕрте уйрăмах палăрнă работникĕсене, партипе совет организацисен руководителĕсене, колхозниксемпе колхозницăсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

(Малалли. Пуçламăшĕ «Чăваш Коммуни» 251-мĕш №-че).

32. Михаил Петрович **Дятела** — сержанта.
33. Павел Евгеньевич **Евгеньева** — Вăрмар районĕнчи Маркс ячĕпе тăракан колхозăн колхозникне.
34. Евсей Егорович **Егорова** — Советски районри «1-ое мая» колхозăн колхозникне.
35. Илья Иванович **Емельянова** — строительствăн 4-мĕш номерлĕ районĕнчи шофера.
36. Яков Ермолаевич **Ермолаева** — Комсомольски районри «Коммунар» колхозăн колхозникне.
37. Михаил Петрович **Зеленские** — старши лейтенанта.
38. Иван Яковлевич **Иванова** — Етĕрне районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн председательне.
39. София Матвеевна **Ивановăна** — Тăвай районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхозăн колхозницине.
40. Прокопий Повлавич **Иванова** — Çĕмĕрле районĕнчи «Комбинат» колхозăн колхозникне.
41. Ольга Ивановна **Ивановăна** — Шупашкар районĕнчи «Малалла» колхозăн колхозницине.
42. Борис Иванович **Игнатьева** — Çулйĕр Управленийĕн производствăпа техника отделĕн начальникне.
43. Виктор Максимович **Исаева** — автобаза слесарьне.
44. Елена Николаевна **Калеевăна** — Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Волна» колхозăн çулйĕр бригадин бригадирне.
45. Владимир Викентьевич **Кальвинские** — строительствăн 6-мĕш номерлĕ районĕнчи механикне.
46. Трофим Кириллович **Кириллова** — Шăхасан районĕнчи «Пионер» колхозăн колхозникне.
47. Николай Федорович **Киселева** — строительствăн 4-мĕш номерлĕ районĕнчи çĕр ĕçĕсене тăвакан бригадăн бригадирне.
48. Степан Иванович **Китаева** — Етĕрне районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхозăн çулйĕр бригадин бригадирне.
49. Иван Иванович **Кондрашина**.
50. Евгения Максимовна **Коновалована** — старши экономиста.
51. Сергей Георгиевич **Константинова** — 6-мĕш номерлĕ автоколонна эксплоатацийĕн начальникне.
52. Александр Николаевич **Костина** — красноармееца.
53. Евгений Иванович **Кудрявцева** — строительствăн 4-мĕш номерлĕ районĕнчи десятникне.
54. Семен Кузьмич **Кузьмина** — Вăрмар районĕнчи ВКП(б) XV съезчĕ ячĕпе тăракан колхозăн колхозникне.
55. Дмитрий Степанович **Курбатова** — Сĕнтĕр районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхозăн колхозникне.
56. Иван Петрович **Курдюкова** — строительствăн 4-мĕш номерлĕ районĕнчи плотниксен бригадирне.
57. Николай Дмитриевич **Лаврова** — строительствăн 4-мĕш номерлĕ районĕнчи автоколоннăн старши механикне.
58. Василий Андреевич **Левина**.
59. Александр Андреевич **Лукоянова** — Сĕнтĕр районĕнчи «1-ое мая» колхозăн колхозникне.
60. Сергей Николаевич **Макарова** — строительство районĕн прорабне.
61. Степан Васильевич **Макарова** — ВКП(б) Елчĕк райкомĕн иккĕмĕш секретарьне.
62. Степан Макарович **Макарова** — Шăхасан райсовет исполком председателĕн заместительне.
63. Петр Яковлевич **Максимова** — çулйĕр Управленийĕн производствăпа техника отдел начальникĕн заместительне.
64. Сильва Абрамовна **Молчанована** — старши экономиста.
65. Зинаида Ивановна **Москаленкона** — строительствăн 7-мĕш номерлĕ районĕнчи трактористкăна.
66. Василий Данилович **Мясникова** — Калинино районĕнчи «Броневик» колхозăн çулйĕр бригадин бригадирне.
67. Акулина Алексеевна **Мясниковăна** — Комсомольски районри «Нива» колхозăн колхозницине.

(Юлашки çитес номерте пулать)

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем Харьков хулипе Харьков облаçĕн территорийĕ çинче вĕсене вăхăтлăха оккупациленĕ тапхăрта тунă тискер ĕçсем пирки пыракан

СУД ПРОЦЕСĔ

Государственнăй обвинителĕн—юстици полковникĕн Н. К. Дунаевăн сăмахĕ

Декабрĕн 18-мĕшĕнчи ирхи ларура суд Председателĕ государственнăй обвинителе — юстици полковникне Н. К. Дунаев юлташа сăмах панă. Мирлĕ пурăнакан темиçе вунă пин совет çыннине вĕлерсе пĕтернĕшĕн, нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем совет çĕрĕ çинче тунă мĕнпур преступленисемшĕн Германи правительстви тата Германи çарĕн командованийĕ айăпла пулнине уççăн кăтартакан пысăк материалсене Военнăй прокурор нумай вуласа панă.

— Харьковра тата Краснодарта, нимĕçсем пулнă мĕнпур çĕрсенче, — тет Дунаев юлташ, —калама çук тискер ĕçсем туни, çынсене массăллăн вĕлерни, çурт-хуралăхсене тата ... пирĕн куç умне тухса тăраççĕ. Пĕтĕм тĕнче халь пирĕн Тăван çĕршыври чечекленсе ларакан хуласемпе ялсен вырăнĕсенче шăлкăнсе ларакан кĕлкунисем кăна курать. Персе, çакса, тата пăчăхтарса вĕлерсе совет çыннисен виллисемпе тулнă тарăн шăтăксене курать.

Государственнăй обвинитель çакна палăртса парать: çак преступленисене вĕсем уйрăм нимĕçсем хăйсен тĕллĕн тунă преступленисем мар, вĕсем вырăс, украинец, белорус халăхĕсене тата ытти халăхсене те вĕлерсе пĕтермелли тĕллĕн хатĕрленĕ программăна туса тăраççĕ. Совет Союзĕнчи халăхсене вĕлерсе пĕтересси çинчен Гитлер çак вăрçă пуçланиччен нумай малтанах каласа панă. Гитлер, Геринг, Геббельс, Гиммлер тата вĕсемпе пĕрле ĕçлекенсем — акă камсем ĕнтĕ Харьковра, Краснодарта тата ытти совет хулисенче нимĕç оккупанчĕсем массăллăн вĕлерни тата тискер ĕçсем туни хавхалантарса, организацилесе тăнă. Малтан тĕнче хуçи пулас тесе, судра çак айăпла ĕçсене тунă. Палăртнă Харьков облаçĕнче тунă тискер ĕçсене тата мирлĕ çынсене вĕлерес ĕçе, çаксем туса пынă: СС çарĕсен обергруппенфюрерĕ Дитрих ертсе пынă СС «Адольф Гитлер» дивизийĕ тата СС çарĕсен группенфюрерĕ ертсе пынă СС «Вилĕ пуç» дивизийĕ салтакĕсемпе офицерĕсем; Харьков хулин штурмбанфюрер Ханебитер ертсе пынă «СД зондеркоманди». Германи Харьков хулинче вăртăн ĕçленĕ полицийĕн группи, хăйĕн начальникĕпе — юстици комиссарĕпе Карханпа пĕрле тата халь айăпланакан çак çынсем: Лангхельд, Риц, Рецлав тата вĕсене пулăшса тăнă сутăнчăк Буланов. Прокурор вĕсенчен кашнийĕ тунă тискер ĕçсене тĕплĕн кăтартса парать, вĕсем айăплине çав тери лайăх палăртса паракан материалсене — вĕсем хăйсем йышăннине, свидетельсем каланине, судпа медицина экспертизи каланине — кăтартса парать.

Малалла прокурор çакăн çинчен калать: Германи 1907-мĕш çулта Гаагăра тунă килĕшĕве тата 1929-мĕш çулта Женевăра тунă килĕшĕве, вăрçă вăрçмалли йĕркесене кăтартса панăскерсене, хутшăннă пулин те, нимĕçсен фашистла захватчикĕсем пĕтĕм тĕнчери мĕнпур законсене тата вăрçă вăрçмалли йĕркесене намăссăн та ирсĕррĕн пăсаççĕ. Гитлер правительствин тата гитлерла çар влаçĕсен нумай приказĕсем калама çук пысăк преступленисем пулса тăракан тата пĕтĕм тĕнчери правăсене чăтма çук пăсакан ĕçсем тума хушаççĕ. Германи çарĕн çынни, мирлĕ хуласемпе ялсене вут тĕртсе çунтаракан, мирлĕ граждансене пере-пере вĕлерекен, хĕрарăмсене, старикрсене тата ачасене çунакан çуртсене хăваласа кĕртекен çар çынни çавна пĕлмесĕр тăма пултараймасть. Çав преступленисене тума хавхалантаракансене те, вĕсене тăвакансене те уголовнăй йĕркепе ответ тыттармалла. Нимĕçсен фашистла çарĕнче тĕрĕс çынсем — халь айăпланакансен сакки çинче ларакансем — уголовнăй преступниксем пулса тăраççĕ, çавăнпа вĕсене хăйсем тунă тискер ĕçсемшĕн тивĕçлипе айăпламалла.

«Гитлеровецсем тунă тискер ĕçсемшĕн вĕсем ответлă пулса тăни çинчен йышăннă деклараципе», 1943-мĕш çулта Америкăри Пĕрлешнĕ Штатсен, Совет Союзĕн тата Великобритани правительствисен пуçлăхĕсем алă пуснăскерĕ, çапла калать: «гитлеровецсене вĕсем юнлă преступленисем тунă государствăсен территорийĕнче тупса, çав государствăсен законĕсемпе айăпламалла», тенĕ. Айăпланакан Рецлавăн, Рицăн, Лангхельдăн совет суче умĕнче Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн законĕсем тăрăх ответ тытмалла.

Çак процесс, тет Дунаев юлташ, нимĕç тăмсайлăхĕ, хăйне хăй каппайчăка шанни тата ытти çынсене курайманни, Гитлерăн шуйттанла системине пула ÿсе кайнăскерсем, калама çук хăрушă результатсене панине пĕтĕм тĕнчене тепĕр хут кăтартса панă. Паттăр Хĕрлĕ Çар, асăл Сталин ертсе пынипе, нимĕçсен çар машинине аркатса тăкнăскер, пыра-пыра çĕнтерет, нимĕç вăрă-хурахĕсене совет çĕрĕ çинчен хăвалать!

Хăйĕн айăплакан сăмахĕн вĕçĕнче, прокурор çапла калать:

— Эпĕ сире, судьясем, фашистла Берлинăн ирсĕр виçĕ представителĕне тата вĕсене пулăшса тăракана, айăпланакансен сакки çинче ларакансене, хăйсен тискер преступленийĕсемшĕн, пирĕн ачасен, арăмĕсемпе амăшĕсен, аппăшĕсемпе аттесен юнĕсемшĕн, куççульĕсемшĕн пысăк наказани пама ыйтатăп!

Паян вĕсем хăйсем тунă тискер ĕçсемшĕн совет суче умĕнче, пирĕн халăх умĕнче тата пĕтĕм тĕнче умĕнче ответ тытаççĕ. Çав тискер ĕçсен пысăкăшĕпе ирсĕрлĕхĕ этем историйĕнчи чи хăрушă ĕçсенчен те, пĕтĕм ĕмĕрхи варварство вăхăтĕнчи тискерлĕхсенчен те нумай иртсе каяççĕ!

Ыран вĕсен начальникĕсем, пирĕн мирлĕ те телейлĕ çĕр çине килсе кĕнĕ çав вăрă-хурахсен атаманĕсем ответ тытĕç. Вĕсем пирĕн халăх ĕçлесе пуйăннă, хăйĕн ачисене пăхса ÿстернĕ, хăйĕн ирĕклĕ государствине туса тăнă çĕр çине килсе кĕчĕç.

Эпĕ Рецлава, Рица, Лангхельда тата Буланова Советлă Социализмлă Республикăсен Верховнăй Совечĕн Президиумĕн 1943-мĕш çулхи апрелĕн 19-мĕшĕнчи Указĕн 1-мĕш пайĕнче кăтартнă преступленисене тунăшăн айăплатăп.

Законпа тĕрĕслĕх ячĕпе,

асаплантарса вĕлернĕ темиçе вунă пин çыннăн ячĕпе,

пирĕн пĕтĕм халăх ячĕпе, —

эпĕ сире, судья граждансем, государственнăй обвинитель пулса тăрса, ирсĕр преступниксене тăваттăшне те çакса вĕлерме йышăнма ыйтатăп.

Государственнăй обвинителĕн сăмахне нимĕçле куçарсан, суд председателĕ айăпланакансене хÿтĕлекен адвокатсене—Н. В. Коммодов, С. К. Казначеев тата Н. П. Белов юлташсене сăмах панă. Вĕсен сăмахĕсене те нимĕçле куçарса панă. Унтан айăпланакансене юлашки сăмах панă.

23 сехет те 40 минутăра суд председателĕ—юстици генерал-майорĕ А. Н. Мясников юлташ Украинăри 4-мĕш фронтăн Военнăй трибуналĕн приговорне вуласа панă. Лангхельд Вильгельма, Риц Ганса, Рецлав Рейнгарда тата Михаил Петрович Буланова **çакса вĕлермелле** тунă. (ТАСС).

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсене—Лангхельда, Рица, Рецлава тата сутăнчăк Буланова çакса вĕлересси çинчен йышăннă приговора пурнăçа кĕртнĕ

Кăçалхи декабрĕн 19-мĕшĕнче, 11 сехетре, Харьков хулинчи площадьре Украинăри 4-мĕш фронтăн Çар Трибуналĕ нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсене—Лангхельд Вильгельма, Риц Ганса, Рецлав Рейнгарда тата вĕсене пулăшакана — Тăван çĕршыва сутса нимĕçсем енне куçнă Буланов Михаил Петровича Харьков хулипе Харьков облаçĕнчи мирлĕ совет çыннисене, вăл шутра хĕрарăмсене, ачасемпе старикрсене, тискеррĕн пĕтернĕшĕн айăпласа çакса вĕлерессипе çинчен йышăннă приговора пурнăçа кĕртнĕ.

Хула площадĕнче Çар Трибуналĕн приговорне пурнăçа кĕртнĕ вăхăтра Харьков хулинчи ĕççыннисем, Харьков облаçĕн хула çывăхĕнчи районĕсенчен килнĕ колхозниксем, Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе офицерĕсем, Совет Союзĕнчи тата ют çĕршывсен пичет работникĕсем — 40.000 çын ытла пулнă.

Приговора вуласа панине тата ăна пурнăçа кĕртнине Харьков хулинчи ĕççыннисем тата Харьков облаçĕнчи районсенчен килнĕ колхозниксем ырласа, нумайччен тăвăллăн алă çупса кĕтсе илнĕ.

ХАРЬКОВ, декабрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС).

Тăван çĕршывăн сулăмлă патриочĕсем

Елизавета Арсентьева

«Вăрнар МТС трактористкине— Е. А. АРСЕНТЬЕВА юлташа, государствăна 150 пат тырă сутнăскере

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ Сирĕн патриотла ĕçĕре—хăвăрăн запасăртан государствăна 150 пăт тырă сутнине пысăка хурса хаклаççĕ. Çакă вăл тăшмана çĕнтерме вăйлăн пулăшни пулать. Сирĕн пример пирĕн нумай колхозсемпе колхозниксене государствăна тырă сутас ĕçе активлăн хутшăнма пулăшрĕ. Сире хĕрÿллĕн саламлатпăр, малашнехи ĕçре çитĕнÿсем тума ырă сунатпăр.»

Сталинла Конституци кунĕ ырăн тенĕ чухне, 1943-мĕш çулхи декабрĕн 4-мĕшĕнче илчĕ çак хыпара Елизавета Арсентьевна. Чĕрери савăнăçпа ырă шухăш-кăмăлсене пĕлтерме ăçтан-ха çиĕнчех тивĕçлĕ сăмахсем шыраса тупăн?

Çакă вăл тăван халăх тав туни пулчĕ. Çакă вăл, 21 çулхи патриотка чаплă ĕç туса, хăйне Хĕрлĕ Çарăн мухтавлă геройĕсемпе пĕр рете тăратни пулчĕ. Темиçе çул хушшиç перекетлесе усранă 150 пăт тыррине государствăна сутса, колхозсен уйхирĕсенче вăя шеллемесĕр ĕçлесе, Елизавета Арсентьева Тăван çĕршыва хÿтĕленĕ çĕрте калама çук паттăр ĕç турĕ.

1.

Елизавета Арсентьевна çинчен ырă ят сарăлнă. Вăрнарпа Калинино районĕсенче:

— Пĕлетпĕр, пит аван пĕлетпĕр вăл хĕрачана, çывăрма пĕлмесĕр ĕçлерĕ пирĕн колхозсен уйхирĕсенче,—теççĕ колхозниксемпе колхозницăсем, ун çинчен сăмах пуçарсанах.

Трактористсемпе комбайнерсем те ăна пурте ырлаççĕ. Арсентьева юлташ çынсемпе тĕл пулсан ялан савăнăçлăн, йĕркеллĕн калаçать, çавăнпа ăна юратаççĕ, ĕçре унтан пример илме тăрăшаççĕ.

Арсентьева юлташ чылай çулсем хушши вăя шеллемесĕр ĕçлет. Хăйĕн тракторне вăл шартлама сивĕ хĕл кунĕсенчех тимлĕн юсать, çуракине тухсан вара çĕр шăначченех колхозсен уйхирĕсенче савăнса, тăрăшса ĕçлет. Çуллахи шăрăх кунсенче талăкĕ-талăкĕпе канма пĕлмест, пĕччен ик-виçĕ çын тумалли ĕçе туса пырать. Иртнĕ çул вăл куллен 4,20 гектар сухалас вырăнне 8—9-шар гектар, хăш пĕр кунсенче 12-шер гектар таранччен сухаларĕ.

— Темле хăвăрт ĕçлесен те, ăна хăваласа çитме çук,—теççĕ ытти трактористсем.

Елизавета Арсентьевна урапаллă тракторпа ĕçлет. Кашни 45 гектар сухаланă хыççăн, трактора тĕплĕн пăхса тухса, пушаннă пайĕсене хытармалла. Тирпейлĕхе пула, Арсентьева юлташ çав ĕçе 60—70 гектар сухаланă хыççăн çеç тунă. Заправка, подтяжка тăвассине яланах хăвăрт туса пынă, çапла вара трактора упранă, унпа ĕçлес вăхăта вăрăмлатнă, ĕç тухăçлăхне ÿстерсе пынă. 1941-мĕш çулта 650 гектар, 1942-мĕш çулта—620 гектар, кăçал (çуракинче кăна) 300 гектар сухаланă вăл. Сахал мар горючи перекетлесе хăварнă. Иртнĕ çул 900 килограмм, кăçал—350 килограмм перекетленĕ.

Иртнĕ çуракинче ăна МТС-ри юлса пыракан 11-мĕш бригадăна пулăшма янă. Арсентьева пĕтĕм чĕререн парăнса ĕçленĕ, ыттисем те вара унтан юлман. Бригада иккĕмĕш вырăна тухнă. Çакăн хыççăн ăна 9-мĕш бригада бригадирĕн помощникĕ пулма уйăрса лартнă.

II.

Елизавета Арсентьевăна эпир хăйĕн тăван ялĕнче—Уйкас Ялтрара (Калинино районĕ) тĕл пултăмăр. Кунта вăл хăйĕн ача чухнехи пурнăçне ыррăн иртгереймен. Ашшĕпе амăшĕнчен пĕр çулта чухнех тăлăха юлнă. Çамрăклах, 7—8 çулта чухнех, пиччĕшĕпе пĕрле Юманайра кĕтÿ кĕтнĕ.

— Ун чухне манăн питĕ вĕренес килетчĕ. Анчах тумтир пулман пирки ялти шкултан çеç вĕренсе тухма лекрĕ, малалла вĕренме каяймарăм,—тесе каласа парать халь Елизавета Арсентьевна.

Хăйĕн юлташĕсем вĕренме çÿренине курсан, чĕри тата хытăрах ыратнă унăн. Çавăн çинчен вăл юратнă пиччĕшне пĕр хутчен çеç мар каласа панă. Пиччĕшĕ, сăмахпа лăплантарнисĕр пуçне, пулăшма вăй-хăват çитереймен. Ялсем ун чухне кулаксене пĕтерсе коллективлă хуçалăх çулĕ çине гин кăна куçнă. Ял харампырĕсен юлашки шанчăкĕ ишĕлсе арканнă. Чухăн хресченсен ирĕклĕ те тулăх пурнăçĕ аталанса пынă.

—Ытлашши ан пăшăрхан-ха, Лиза. Колхозра тăрăшса ĕçлĕн те, сана вĕренме ярĕç,—тесе лăплантарнă ăна пиччĕшĕ.

... Кĕтнĕ кун çитнĕ. Пĕррехинне ăр-ирех колхоз председателĕ Василий Никитич Елизаветăна канцелярине чĕннĕ.

— Миçе çул вĕреннĕччĕ-ха эсĕ?—ыйтнă унтан председатель.

— Тăваттăмĕш класран вĕренсе тухнă,—ответленĕ вăл.

Председатель хăй умĕнче тăракан хĕрачана савăнăçлă хыпар пĕлтернĕ.

— Сана эпир трактористсен курсне ярасшăн. Çамрăккине çамрăк ĕнтĕ эсĕ, анчах тăрăшсан, лайăх трактористка пулăн,—тенĕ председатель.

Хĕрача хĕпĕртесе ÿкнĕ.

— Каятăп, паянах тухса кайма пултаратăп,—хăвăрттăн ответленĕ 16 çулхи хĕрача.

Курсра 6 уйăх вĕреннĕ, тракторпа ĕçлеме права илнĕ. Çапла вăл 1938 çулта трактор çине ларса пĕрремĕш хут колхоз уйхирне тухнă.

Колхозăн аслă уйхирĕ çине йĕри-тавра пăхса çавăрăннă та савăннă вăл. Савăнмасăр, ăна çавăн пек чаплă машина шанса панă-çке! Вăл пĕлнĕ: хăйне шанса панă хурçă утпа ĕçлеме мĕн чухлĕ хăнăхатăн, ĕç çавăн чухлĕ ăнса пырать, колхозсене тухăçлă тырпул туса илме çавăн чухлĕ ытларах пулăшатăн. Çак шухăшпа ир-ирех, кăвак шуçăм килсенех ĕçе тытăннă вăл, каçхине те çав шухăшпах ĕçрен таврăннă.

... 1941-мĕш çулхи июнĕн 21-мĕшĕнче пирĕн тăван çĕршывра пур çĕрте те хĕрÿ ĕç вĕресе тăнă. Çав кун Арсентьева та колхоз хирĕнче хĕрсех суха тунă. Кам шутланă-ха ун чухне тискер те ултавлă тăшман мирлĕ пурнăçа пăсса пирĕн çине килсе тапăнĕ тесе?!.

Тăшмана хирĕç мĕнпур совет халăхĕ кĕрешĕве тухрĕ. Сталин юлташ фронта пулăшма чĕнсе каланă хыççăн ĕççыннисем мĕнпур вăя фронта пулăшма мобилизацилерĕç.

Трактористка Елизавета Арсентьева, 18 çулхи хĕрача, хăйне фронта яма ыйтнă. „Эсĕ кунта та пысăк пулăшу паратăн",—тенĕ МТС директорĕ. Арсентьевăн килĕшмеллех пулнă. Вара вăл хăйĕн мĕнпур пултарулăхĕпе вăйне шеллемесĕр ĕçлеме тытăннă.

Çĕнтерÿ тума стахановла ĕçленипе çеç мар, укçа-тенкĕ тата ăшă япаласем, тырпул парса пулăшса тăрать вăл. Иртнĕ çулта оборона фондне 3000 тенкĕ укçа пачĕ, Военнăй заема 3500 тенкĕлĕх çырăнчĕ, фронтовиксем патне темиçе мăшăр ăшă алшишсемпе чăлхасем çыхса тата хаклă парнесем ячĕ Кăçал та Военнăй Заем облигацийĕсене 4000 тенкĕлĕх, лотерея билечĕсене 500 тенкĕлĕх илчĕ, государствăна 150 пăт тырă сутрĕ.

III.

Çулăмлă патриоткă хăй тунă ĕçсене тата фронта пулăшнине çителĕклĕ тесе шутламасть. Вăл çĕнтерÿ тăвассишĕн хăйĕн пурнăçне пама та хатĕр.

— Мĕнех-ха вăл эпĕ нормăна иртгерсе тултарни е çĕршыва пулăшни? Манăн хамăн алăпа тăшмана пĕтересчĕ. Çынсем, пирĕн малашнехи пурнăç телейлĕ пултăр тесе, юн тăкаççĕ. Çĕнтерÿ тăвассишĕн пурнăçĕсене те шеллесе тăмаççĕ. Пурин те çавсем пек пулмалла пирĕн,—тет Елизавета Арсентьевна.

Фронтран кашни кун çĕнĕрен те çĕнĕ хыпарсем килеççĕ. Тăшмана çĕнтерсен, фронтран тăвансем таврăнĕç. Вĕсемпе пĕрлех Елизавета Арсентьевнăн пĕчĕк чухне кĕтÿ кĕтсе çÿренĕ юратнă пиччĕшĕ те—Николай—тăван ялне килĕ. Вăл хăйĕн йăмăкĕнчен: «Эсĕ тăшмана çĕнтерме фронта мĕнле пулăшрăн?»—тесе ыйтĕ. Тăван çĕршывăн çулăмлă патриотки Елизавета Арсентьевна Арсентьева фронтовикăн кашни ыйтăвне тивĕçлĕ ответ пама пĕлĕ. Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕ ăна Хисеплĕ грамота парса наградăланă, республикăри Хисеп Хăми çине кĕртнĕ.

Чăваш халăхĕ çулăмлă патриоткăна тав туса, тăван çĕршывшăн малашне те ывăнма пĕлмесĕр тăрăшма ырлăх сунать.

Х. ЛИСИН.

(„Чăваш Коммуни" корр.).

Ют çĕршывсенче

ХАРЬКОВРИ ПРОЦЕСС ПИРКИ США-па АНГЛИРЕ МĔН ÇЫРАÇÇĔ

ЛОНДОН, декабрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли экспресс» хаçат гитлеровецсен Харьков хулипе Харьков облаçĕнче тунă тискер ĕçĕсем пирки пыракан процесс çинчен çырнă статьяра çапла калать: Харьковри судăн приговорне вырăссем хĕпĕртесе йышăнни вăл приговора пĕтĕм цивилизацилĕ тĕнче хапăл тунине пĕлтерет. «Вырăс халăхĕ тÿснине тата унăн тăшманĕсен ирсĕрлĕхĕпе тискерлĕхне айăпланакансем нихçанхинчен лайăхрах палăртса панă. Çав процесс пусмăрлавă халăхсем пирки нацистсем йышăннă плансен ăшчиккине кăтартса парать».

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Колумбири радио саракан компанин комментаторĕ Хорш каланă тăрăх, Харьковра пулса иртнĕ суд çар преступникĕсене ответ тыттарас енĕпе пĕтĕм историре паллă вырăн йышанса тăрать, çав суд тискер ĕçсем тунăшăн айăплă пулса тăракан çынсене тĕрĕслĕх сучĕ умне тăратассин малтанхи утăмĕ пулса тăрать. Суд çак чăнлăха пурнăçа кĕртет: вăрçă пуçласа яракан тата тискер ĕçсем тăвакан çынсене кашнине уйрăмшарăн ответ тыттармалла. Çак суд тĕнчене хăрушăсăрлăх кÿрес тĕлĕшпе пирĕн вăхăтри чи паллă мероприяти пулса тăрать пулмалла».

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, декабрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: акăлчансен 8-мĕш армийĕн чаçĕсем, тăшман вăйлăн хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, Адриатика тинĕсĕн хĕрринчи районра малалла тапăнса пынă. Танковăй чаçсем тăшмана йывăр çухатусем кÿнĕ. Центральнăй секторта 8-мĕш армин чаçĕсем çулйĕрсĕр вырăнсенче малалла куçнă.

Американецсен 5-мĕш армийĕн чаçĕсем тăшман вăйлăн хÿтĕлесе тăнă Сан-Пьетро хулине тытса илнĕ те халĕ малалла куçса пыраççĕ. Тусем çинчи хăшпĕр участоксенче союзниксен фрончĕн линийĕ икĕ мильăна çити малалла куçнă.

Декабрĕн 19-мĕшĕнче союзниксен авиацийĕ Инсбруке (Австрия) чугун çул узелне тата Аугсбург хулине (Кăнтăр Германия) атакăланă. Тăшман истребителĕсем вăйлăн хирĕç тăнă. Çавăн пекех тата тăшманăн вăтам Италири чугун çулĕсем çине, тĕрлĕрен портсем çине тата Адриатика тинĕсĕнчи суднăсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем Сплит (Югославия) тата Чивитавеккиа çине (Рим çывăхĕнче) бомбăсем пăрахнă. Çав операципе ытти операцисенче тăшманăн 43 самолетне пĕтерсе тăкнă. Союзниксен 16 самолечĕ хăйсен базисене таврăнман.

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔ ГЕРМАНИ ХУЛИСЕНЕ КĂНТĂРЛА ТАПАННИ

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). США-н çар министрĕ Стимсон пресс-конференцире сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: Америка самолечĕсем Германие кăнтăрла тапăннă вăхăтра бомбăсем питĕ нумай пăрахаççĕ. Вĕсем бомбăсене Англи авиацийĕ çĕрлехи чи вăйлă тапăнусенче пăрахнă чухлех пăрахаççĕ.

Иртнĕ эрнере Америка авиацийĕ Германие икĕ хутчен питĕ вăйлăн тапăннă. Çав тапăнусенче кашнинчех пиншер бомбардировщикпа истребитель ытла пулнă. Декабрĕн 11-мĕшĕнче Америка авиацийĕ Эмден хулине тапăннă. Бомбăсене çавăнти подводнăй лодкăсем тăвакан верфьсем çине, портри сооруженисемпе заводсем çине пăрахнă. Декабрĕн 13-мĕшĕнче Германин ытти хулисене атакăланă. Анчах та çанталăк пĕлĕтлĕ пулнă пирки, мĕн чухлĕ сиен кÿнине пĕлме май пулман.

Стимсон малалла çапла каланă: американецсем Англири авиацийĕ иртнĕ уйăхра сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 493 самолетне персе ÿкернĕ.

ЧЕРЧИЛЛЬ СЫВЛĂХĔ ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, декабрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Лондонра Черчилль сывлăхĕ çинчен бюллетень пичетлесе кăларнă. Бюллетеньре çапла каланă: премьер-министрăн ÿт температури лайăх, пневмони паллисем пĕтсе пыраççĕ.

Çуракине большевикла хатĕрленер

ВĂРЛĂХ СОРТЛАС ТĔЛĔШПЕ ЛАЙĂХ ĔÇЛЕКЕНСЕМ

Вăрнар районĕнчи Сандимиркăри «Гигант» колхоз членĕсем, Сталин юлташăн Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарни çинчен тунă докладне тĕплĕн вĕреннĕ хыççăн, хăйсем çине çуракине ăнăçлăн хатĕрленес тĕлĕшпе татăклă обязательствăсем илчĕç. Вĕсем çав обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ.

Килес çуракинче акмашкăн 840 центнер вăрлăха пĕтĕмĕшпех сортласа хунă. Çак ĕçе тума ятарласа пĕр звено тунăччĕ. Вăрлăх сортланă çĕрте Тайрухина тата Латышова колхозницăсем аван ĕçлерĕç. Вĕсем кашни кунхи нормăна 150 процент таран тултарса пычĕç. Уйрăмах аван ĕçленĕшĕн Тайрухина юлташа колхоз правленийĕ пĕр сысна çури парса премилерĕ.

Колхоз тимĕрçи Васильев юлташ та плугсемпе машинăсене юсас тĕлĕшпе аван ĕçлет. Плугсене тата 4 сеялкăна тĕплĕн юсаса лартнă. Халь урапасене тата ут таврашĕсене юсаççĕ. Васильев юлташа плугсемпе ытти машинăсене тĕплĕн юсанăшăн тата ĕçе хăвăрт тунăшăн 1 сысна çури тата 200 тенкĕ укçа парса премилерĕç.

Халь колхозниксем уя тислĕк турттараççĕ, хирте юр тытас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ.

В. КИРИЛЛОВ.

Çуракине хатĕрленмелли хĕрÿллĕ кунсем

СОВЕТСКОЕ. Районри пур колхозсем те çуракине тимлĕн хатĕрленме тытăнчĕç. Çатракассинчи «Рекорд» колхоз 135 центнер вăрлăха триерпа сортласа пĕтерчĕ. Ялхуçалăх машинисене пĕтĕмпех юсаса, юр кĕмен сарайсене майласа лартнă. Уя 1.400 лав тислĕк кăларнă.

Анаткасри «Октябрь» колхозра та çуракине хатĕрленес ĕç хĕрсех пырать. 26 плугпа сеялкăна юсаса пĕтернĕ. Колхозниксем 24 çуна юсанă. Акмалли вăрлăхсем çителĕклĕ, вĕсене пĕтĕмпех тасатса хунă.

«Броневик» колхозра 90 центнер вăрлăх сортланă, сеялкăпа 12 плуг тата сÿресем çителĕклĕ таран юсаса склада пухса лартнă.

М. СТЕПАНОВА.

Комсомолецсем вăйлă тырпулшăн кĕрешеççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, декабрĕн 20-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Комсомолăн районри пуçламĕш организацийĕсем Вăрнар районĕнчи ялхуçалăхĕнче малта пыракан çамрăк колхозниксем чĕнсе каланине пухусенче сÿтсе явнă. Çавăн хыççăн ялсенчи çамрăксем кашни гектартан çĕр пăт тырă туса илессишĕн пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç.

Янчелло ялсоветĕнчи «Прогресс» колхозри комсомолецсем çуракине тимлĕн хатĕрленеççĕ. Çавна пула колхоз паянхи куна уя 1000 лав тислĕк кăларнă. Вăрлăх сортлас тĕлĕшпе кунта комсомолецсен звенине тунă. Унта 5 комсомолец. ВЛКСМ организацийĕн секретарĕ М. Семенова юлташ хăй звеновод пулса ĕçлет. Халĕ вĕсем 50 центнер ытла вăрлăх сортланă, кунсăр пуçне 48 центнер пăрçана алăпа суйланă. Колхоз тимĕрçи С. Петров юлташ ялхуçалăх машинисене юсас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлет. 20 плуг, 20 сÿре, 3 сеялка юсанă та ĕнтĕ вăл.

Çавăн пекех комсомолăн Шурçырма ялсоветĕнчи «Искра» колхозри пуçламĕш организацийĕ те çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе лайăх ĕçлет. Паянхи куна унти çамрăксем 20 гектар çинче юр тытнă. Халĕ вырăнти удобренисем хатĕрлеççĕ, вăрлăх сортлаççĕ.

Н. СКВОРЦОВ,

ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

Колхоз платникĕсен паха ĕçĕ

КАНАШ. (**Хамăр корр.**). Сикассинчи Шмидт ячĕпе тăракан колхозра кăçал строительство тĕлĕшпе ĕçлеме платниксен бригадине организациленĕ. Бригадăра 8 çын. Çак бригада октябрьпе ноябрь уйăхĕсенче колхоз валли çуртйĕрсем тума 446 кубометр вăрман турттарнă.

Колхозăн иртнĕ хĕлле выльăх-чĕрлĕхсем валли витесем çитмен, фермăсенче ĕçлекенсем валли уйрăм пÿртсем пулман. Платниксен бригади лайăх ĕçленине пула, колхозра кăçал çĕнĕрен икĕ подвал тунă, кивĕ витесен тăррисемпе урайĕсене юсанă, пăрусем валли çĕнĕ пÿрт тунă, вите тунă, конюхсемпе выльăх пăхакансем валли виçĕ пÿрт лартнă, чăх-чĕп фермин витине аслăлатнă, ĕне витине юсанă. **С. ШАДИН.**

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского. 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 514 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59×42 п. л. Тираж 14.400 экз.